25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
20
ШАМАТКУН
41(6278) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ ЛЮБОТИН, МЕРЕФА, ОБОЯНЬ ХУЛИСЕНЕ ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

1). Февралĕн 19-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, Харьковран хĕвеланăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле наступлени туса пырса, ЛЮБОТИН хулипе чугунçул станцине тата МЕРЕФА хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

2). Курск облаçĕнче пирĕн войскăсем, татăклă атака тунă хыççăн, ОБОЯНЬ хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Тăшманăн çаварса илнĕ гарнизонне вĕлерсе пĕтернĕ, пĕр пайне тыткăна илнĕ. КУРСКПА ХАРЬКОВ хушшинчи чугунçула тата шоссе çулне тăшмантан пĕтĕмпех тасатнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Парторганизаци тата производство ыйтăвĕсем

Партин предприятисенчи организацийĕсен ĕçĕнче производство ыйтăвĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Парторганизацисен секретарĕсем производство ыйтăвĕсемпе пурăнаççĕ, вĕсем предприятири ĕçсене пур енĕпе хутшăнма, çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем, предприяти директорĕсем пекех, предприятири производство планне пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленишĕн пирĕн большевикла партипе совет правительстви умĕнче ответлă пулнине пĕр самантлăха та манмаççĕ. Вĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ: вăрçă кунĕсенче парторганизацин тата унăн руководителĕн пултарулăхне предприяти государство планĕсене вăхăтра пурнăçласа пыни тăрăх тĕрĕслеççĕ.

Республикăри чылай парторганизацисем отечественнăй вăрçă лартнă пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Куçарса килнĕ оборудованине вырнаçтарса ĕçе ярас тĕлĕшпе республикăра пысăк ĕçсем туса иртернĕ. 1942 çулта продукци туса кăларас плана Шупашкар хулинчи промышленность предприятийĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, 102,2 процент тултарнă. Нумай предприятисем çулталăк планне срокчен тултарнă.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура 1943 çулхи январь уйăхĕнче те пирĕн республикăри промышленность чылай çитĕнÿсем турĕ. Бунин юлташ дирекор заместителĕ пулса тăракан завод коллективне иккĕмĕш преми памалла тунă. Челноковпа Володин юлташсем главнăй инженерсем пулса тăракан заводсем виççĕмĕш премисем илчĕç. Шупашкарти эрех завдне виççĕмĕш преми памалла тунă.

Вырăнти промышленноçăн предприятийĕсемпе промартельсем те лайăхрах ĕçлеме тытăнни сисĕнет. Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕ 1943 çулхи январь уйăхĕнче тĕп продукци кăларас плана 102,1 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас плана 116.7 процент тултарнă, декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, продукци туса кăларассине чылай ÿстернĕ. Ăна Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă.

Çÿлте асăннă предприятисенчи парторганизацисем рабочисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе йĕркелесе ячĕç. Вăл предприятисенче çĕнĕ кадрсем ÿсрĕç. Парторганизацисем массăсемпе çыхăнса тăрасси çирĕпленчĕ, коммунистсен партире тăман массăсем хушшинчи влиянийĕ вăйланчĕ.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи парторганизаци юлашки вăхăтра партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатрĕ. Унта мастерсемпе стахановецсен канашлăвĕсене тăтăшах ирттереççĕ, çамрăк рабочисене пулăшса тăраççĕ, рабочисен политикăллă пĕлĕвĕсене ÿстерессишĕн куллен тăрăшаççĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн парторгĕ Мазуренко юлташран вăл хăйĕн ĕçне мĕнле йĕркелени çинчен ыйтсан, çапла каласа пачĕ: «Парти руководителĕ—вăл администратор мар. Рабочисемпе çыхăнса ĕçлессин ăнăçлăхне приказ мар, парторганизацин авторитечĕпе вăйĕ татса парать. Çынсемпе çывăх тăрассине, вĕсене ĕçе организацилессине тата вĕрентсе çитĕнтерессине эпĕ пирĕн тĕп ĕç тесе шутлатăп. Рабочисемпе тата коммунистсемпе час-часах курнăçасси, вĕсемпе ытларах канашласси, вĕсене йывăрлăхсем килсе тухнă вăхăтра пулăшасси, рабочисемпе служащисене васкавлă задани сене çеç мар, ялавхи заданисене те вăхăтра пурнăçлама çĕклесси пирĕн парторганизацин ĕçĕнче тĕп вырăнта тăрать. Ăста ĕç начартарах—эпир унта пулма тăрăшатпăр».

Çĕмĕрле комбиначĕ пĕр вăхăтра перекетлĕхшĕн начар кĕрешнĕ. Парторганизаци материалсемпе чĕртавара, электроэнергипе çунтармалли япаласене тирпейлĕн расходлассишĕн кĕрешÿ пуçарнă. Юлашки 2 уйăх хушшинче электроэнергипе пăса перекетлес тĕлĕшпе организациллĕ-техникăллă мероприятисем туса ирттернĕ. Çапла вара, декабрьпе январь уйăхĕнче 50.000 киловатт-сехете яхăн электроэнерги, 2.960 тонна пăс перекетленĕ. Урăхла каласан, комбинат икĕ уйăхрах 7.000 кубла метра яхăн вутă перекетленĕ.

Секретарь — организатор. Çитменлĕхсене тĕл пулсан, унăн вĕсене пĕтерттерес тĕлĕшпе çеç мар, çав çитменлĕхсем мĕнрен килнине те шыраса тупас пулать. Çав никĕс çинче производствăн тĕп ыйтăвĕсене татса памалла.

Канаш хулинчи промкомбинат уйăхран-уйăха хăйĕн планне пурнăçламасăр пурăннă. Унăн управляющийĕ пулса ĕçленĕ Захватов юлташ рабочисемпе служащисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн, производствăна кирлĕ пек организацилессишĕн тăрăшман. Производство планне пурнăçлайманнине вăл «чĕртавар тата материалсем çуккипе» ăнлантарса пурăннă. ВКП(б) горкомĕ комбинат ĕçне тимлĕн тĕпчесе вĕреннĕ хыççăн производство чăрмавĕ пачах урăххинче—Захватов çаврăнăçусăр пулнинче тесе палăртнă. Комбината ертсе пыма ĕçе юратакан коммуниста И. Шлапак юлташа лартнă. Шлапак юлташ чи малтанах рабочисемпе служащисен пурнăç условийĕсене лайăхлатнă: рабочисем валли комбинатрах столовăй уçнă, общежитине йĕркене кĕртнĕ, производствăна çĕнĕлле йĕркеленĕ. Халĕ ĕнтĕ промкомбината чĕртаварсем те, материалсем те çитеççĕ. Промкомбинат производство планне пĕр тикĕс, ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисемпе служащисен хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Унта кадрсем хатĕрлесси, кадрсем хушшинче, уйрăмах нациллĕ кадрсем хушшинче ĕçлесси тата производство процесне лайăхлатасси çÿрĕккĕн пулса пырать. Завод кадрсем хатĕрлемелли çулталăкри плана 1,7 процент çеç тултарнă. Стахановла шкулсенче вĕрентме палăртнă рабочисенчен 9.6 процентне çеç вĕренĕве явăçтарнă, вĕсенчен пĕри те вĕренсе тухман.

Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа пуçланнă ăмăртăва хутшăнса, Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ рационализаторла сĕнÿсем 75-рен кая мар пухма обязательство илнĕччĕ. Анчах паянхи кунччен мĕнпурĕ те 19 сĕнÿ çеç пухнă. Вагон урапи сем тăвакан, вагонсем юсакан цехсен начальникĕсемпе цехсенчи парторганизацисем, çавăн пекех партбюро секретарĕ Сорокин юлташ хăй те илнĕ обязательство çинчен маннă пулас. Большевик сăмахĕ — çирĕп сăмах. Тума пулнă—тăвас пулать.

Январь уйăхĕнче электростанци начар ĕçленĕ пирки, Шупашкар хулинчи чылай предприятисем производство планне пурнăçлаймарĕç: Шупашкар хулинчи парторганизацин VIII-мĕш конференцийĕ ВКП(б) горкомĕ электростанцин ĕçне лайăхлатассишĕн çителĕксĕр кĕрешнине палăртрĕ. Конференци решенийĕсене пурнăçлассишĕн чи малтан партин электростанцинчи организацийĕн тата унăн секретарĕн вăйлăн кĕрешмелле.

Канаш хулинчи электростанци те çителĕксĕр ĕçлет. Парти организацийĕсен электростанци ĕçне куллен контрольлесе тăмалла, вĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттермелле. Çакă вăл предприятисене производство планне тултарма пулăшни пулать.

Парти организацийĕсен умĕнче питех те ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен, вăрçă йывăрлăхĕсене çĕнтерсе, кашни предприятие, кашни промысла артельне производство планне тикĕс пурнăçласа пыракан тăвассишĕн кĕрешмелле. 1943 çулта пирĕн республикăра юлса пыракан пĕр предприяти те ан пултăр!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 18-мĕшĕнче Орел облаçĕнче пирĕн войскăсем **Залегощь** ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, **Покровское, Верхняя Сосна** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса **пырса** халăх **пурăнакан** темиçе **пункта**, çав шутра **Матвеев** Курган ятлă район **центрне тытса** илнĕ.

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем **Северская** ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тата **Старовеличковская, Смоленская, Азовская** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Февралĕн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 20 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, тăшман пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новошахтинскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта тытса илнĕ. Тăшмана пысăк çухатусем тÿстернĕ. Пирĕн пĕр механизированнăй соединени кăна нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 1.500 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн войскăсене малалла кайма чарас тесе, нимĕçсем васкаса çĕнĕ чаçсемпе соединенисем тăваççĕ. Пирĕн войскăсем нимĕçсен пĕр пехотнăй дивизине пысăк çухатусем тÿстернĕ: çав дивизие пуринчен ытла лазаретсенчен вăхăт çитиччен кăларса янă аманнă салтаксемпе офицерсене, çавăн пекех тата Таганрогри пе ытти вырăнсенчи аэродромсен командисенчи салтаксене пухса тунă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем тăшманпа хаяррăн çапăçса унăн 10 танкне тата 2 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 37 автомашина, 7 миномет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Пĕр участокра совет подразделенийĕсем малалла куçса нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшманăн пехотипе танкĕсен контратакине сирсе янă. Славянск хулинче пирĕн боецсем горючин 2 складне, тумтирсен складне, боеприпассен складне тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ **çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин çăмăллăн куçакан группи тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та, 15—20 километр малалла** кайса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски часть икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 30 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 18 оруди, 50 пулемет, 400 винтовкăпа автомат, 2 танкетка, 34 автомашина тата пĕр радиостанци пур.

* * *

Карело-Финн ССР-ĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Тойво Антикайнен ячĕпе тата Чапаев ячĕпе тăракан отрячĕсем белофинсен гарнизонне сасартăк тапăннă. Часовойсене вĕлерсе, партизансем пĕр сас-чĕвĕсĕрех халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайнă. Çапăçура тăшманăн гарнизонне аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 2 туппине, инçе перекен пĕр туппине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 2 складне çунтарса янă, продовольстви складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 44-мĕш пехотнăй дивизийĕн тыткăна лекнĕ командирĕ генерал-лейтенант Дюбуа çапла каласа панă: «Мана 131-мĕш пехотнăй полкăн команднăй пунктĕнче Вальтер подполковникпа тата ытти офицерсемпе пĕрле тыткăна илчĕç. Сталинградшăн пынă çапăçу ытла та вăраха кайрĕ, пирĕн резервсем çитмерĕç. Эпир вырăссем хĕлле наступлени тăвĕç тесех шутланă. Анчах та Хĕрлĕ Çар нимĕçсен чи вăйлă армийĕсенчен пĕрне çавăрса илсе пĕтерсе тăкма пултарĕ тесе никам та шухăшламан. 6-мĕш армие çавăрса илсе пĕтерсе тăкни вăл пысăк трагеди пулса тăчĕ. Пĕлтĕр нимĕç войскисем Мускав патĕнчен каялла чакнă хыççăн та пирĕн шухăш-кăмăлсем питĕ пусăрăнчăк пулчĕç: Сталинград патĕнче поражени тÿсни вăл пире тата вăйларах пырса çапни пулса тăрать, вăл вăрçă ĕçĕсем малашне мĕнле пынинче палăрĕ. Эпĕ 44-мĕш дивизие йышăннă чухне унта 17.000 çынна яхăнччĕ. Эпĕ командир пулса тăнă вăхăтра пире тăватă хутчен чылай пысăк вăйсем хушса пачĕç. Пирĕн дивизие çавăрса илес умĕн 13.000 çынна яхăн пулнă. Вĕсем вара е çапăçусенче пĕтрĕç, е тыткăна лекрĕç».

* * *

Хĕрлĕ Çар февралĕн 16-мĕшĕнче Харьков хулине илни çинчен калакан хыпар пĕтĕм тĕнчене саралнă, вăл çĕр чăмăрĕн чи инçери вырăнĕсене те çитнĕ. Вăл хыпара тĕнчери радиостанцисенчен нумайĕшĕ радио тăрăх сарчĕç, вăл хыпара мĕнпур çĕршывсен хаçачĕсем тенĕ пекех пичетлесе кăларчĕç. Нимĕç командованийĕ кăна совет войскисем Харькова илни çинчен пĕлтермест-ха. Гитлерла **ултавçăсем Харьковра çапăçусем пыраççĕ тесе** халĕ те халлап яраççĕ. Сăмахран, **Германин информаци бюровĕ февралĕн 18-мĕшĕ** ыран **тенĕ чух çĕрле çапла пĕлтерчĕ: Харьковри урамсенче халĕ** те **хаяр çапăçусем пыраççĕ-ха.** Хулан пысăк пайне вут хыпса илнĕ. Хулан ытти пайĕсем те çапăçакан икĕ енĕшĕн те утса тухмалла мар пулса тăнă...» Гитлеровецсен çак пĕлтерĕвĕ пĕтĕмпех суя сăмах пулса тăрать. Ирĕке кăларнă Харьковра халь нимĕнле çапăçусем те пымаççĕ. Хĕрлĕ Çарăн малалла тапăнса пыракан чаçĕсем, Харьковран хĕвеланăçнелле кайса, малалла куçса пыраççĕ.

Çухалса кайнă гитлеровецсем тĕрĕссине калама хăраççĕ. Вĕсем юлашки вăхăтра пыра-пыра çапнипе хăраса ÿкнĕ нимĕç халăхне тепĕр хут хăратса ÿкерес шĕн мар, вĕсем Харькова пани çинчен калакан хыпара илтме халăха майĕпен хатĕрлеççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Берлина «Утса тухмалла мар урамсем» çинчен тата Харьков урамĕсенчи çапăçусем çинчен калакан халлапсем кирлĕ пулнă.

Февралĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çапăçса пырса малалла кайнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсене халăх пурăнакан тата темиçе пунктран хĕссе кăларнă. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем калана тăрăх, юлашки çапăçусенче нимĕçсен 403-мĕш охраннăй дивизине çапса аркатнă; çав дивизие полицейскисемпе жандармсенчен тунă, ăна нумай пулмасть çеç çапăçăва кĕртнĕ. Çав дивизин аркатса тăкнă чаçĕсен юлашкийĕсем пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе халь пĕр йĕркесĕр каялла чакаççĕ.

* * *

Ровеньки районĕнче пирĕн чаçсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр рабочи поселокшăн пынă çапăçура 7 оруди, шултăра калибрлă 5 пулемет, 7 тягач, груз тиенĕ 15 лав тата 17 автомашина тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшман пехотин икĕ ротине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краматорская районĕнчи пĕр участокра гитлеровецсем контраатака тунă, анчах вĕсене пысăк çухатусем тÿстерсе каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен çунса кайнă 6 танкĕ тата 200 таран вилли выртса юлнă.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн участокĕнче гитлеровецсем контратакăна икĕ пехотнăй полкăн юлашкийĕсене кĕртсе янă, вĕсене 20 танк пулăшса пынă. Совет боецĕсем пехотăн хĕçпăшалĕсемпе персе нимĕçсене çĕр çумне лапчăнтарнă. Çав вăхăтра пирĕн икĕ моторизованнăй подразделени тăшмана флангсенчен тата тылран пырса çапнă, 300 çити салтакпа офицер вилсен, нимĕçсем каялла чакнă. Пирĕннисем 7 танк, хăйтĕллĕн çÿрекен 4 оруди, 12 пулемет, ултă кĕпçеллĕ 2 миномет тата боеприпассем тиенĕ 19 автомашина тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре Н-ски соединенин чаçĕсем халăх пурăнакан 10 пункта йышăнса илнĕ, 8 оруди, 20 мотоцикл, 170 велосипед, боеприпассен 2 складне тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ, Хĕрлĕ Çарăн малалла тапăнса пыракан чаçĕсемпе çыхăнса кĕрешсе, шоссе çулĕ çинче засада тунă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, партизансем 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, çав гитлеровецсем совет войскисем пыра-пыра çапнипе пĕр йĕркесĕр каялла чакнă пулнă. Тепĕр шоссе çулĕ çинче çав отрядри партизансемех 235 лаша, 130 винтовка тата темиçе пулеметпа миномет тытса илнĕ.

* * *

Курск облаçĕнчи Новоселовка ялĕ урлă каçнă чухне нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ халăха çаратса тухнă. Хăйсемпе илсе кайманнине çав çаратуçăсем çĕмĕрсе, пăсса хăварнă. Гитлеровецсен пĕр ушкăнĕ Дмитрий Серенко колхозникĕн пÿртне кĕрсе кайнă та унăн 15 çулхи ывăлне ярса тытса ăна тискеррĕн асаплантарнă. Бандитсем Евдокия Лелина колхозницăн çуртне вут тĕртнĕ. Колхозницăпа унăн хĕрĕ Зоя çунакан çуртран чупса тухсан, фашистла ирсĕрсем вĕсене автоматпа персе вĕлернĕ.

* * *

Французсен ирĕклĕ стрелокĕсем Шалон-Сюр-Саора нимĕç салтакĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта илсе каякан çар эшелонне крушени тунă. Крушени поезд чи хăвăрт пынă вăхăтра пулнă. 250 ытла гитлеровец вилнĕ. Аманнă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен хисепĕ вилнисен хисепĕнчен темиçе хут пысăкрах.

Донбасри çапăçусем

ДЕИСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Донбасра вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Донбасс çĕрĕнчен тăшмана пĕр чарăнмасăр хăваласа пыракан Хĕрлĕ Çарăн наступлени тăвакан чаçĕсем кăнтăрла та, çĕрле те хăйсен ĕçне парахмаççĕ. Кăнтăрлахи хĕрÿ çапăçусем çĕрлехи маршсемпе тата атакăсемпе улшăнаççĕ. Пирĕн куçса çÿрекен ушкăнсем тăшман тылне пит шала кĕреççĕ, унăн коммуникацийĕсене çавăрса илеççĕ, нимĕç фашисчĕсен группировкисене пĕрпĕринчен татса уйăрса, вĕсене наступлени туса пыракан хамăр чаçсем вăйлă çапмалла тăваççĕ. Нимĕçсем татти-пыппи сĕрех хаяр контратакăсем тăваççĕ. Анчах пирĕн войскăсене малалла куçма чарас тесе хăтланнисем ăнăçсăр пĕтсе лараççĕ.

Тăшманăн нумай контратакисене сирсе ярса, Н-ски часть çĕнĕрен малалла куçнă, нимĕçсене халăх пурăнакан пысăк пунктран сирпĕтсе кăларнă. Пирĕн ытти чаçсем те, тăшмана пысăк çухатусем тутарса, хăйсем наступлени тăвакан района ăнăçлăн сарса пыраççĕ. Гитлеровецсем вăйлă тĕреклетнĕ пункт патĕнче пулнă хаяр çапăçусенче пирĕн гвардеецсем 800 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтернĕ тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Ăнăçлăхсемпе хавхаланса, совет воинĕсем çав тери паттăррăн çапăçаççĕ. Пĕр контратака вăхăтĕнче Вардыгин пулемет расчечĕ хÿтĕлекен рубеж çине нимĕçсем 200 салтака яхăн янă. Пĕрмаях автоматсенчен перекен нумай йышлă гитлеровецсем çывхарсах пынă. Вĕсем çитесси 50 метртан ытла мар юлсан, Вардыгин: „Огонь“, тесе команда панă.

Фашистсен речĕсене тăхлан çумăрĕ пĕрĕхтерме пуçланă, вĕсен стройĕнчен вуншар салтаксене кăлара-кăлара пăрахнă. Нимĕçсен каялла чакмалла пулнă. Çав вăхăтра боецсенчен тахăшĕ: „Тăван Донбасшăн, малалла!“ тесе кăшкăрнă та, подразделени атакăна кайнă. Тăшмана нумай аякка ывăтса янă, çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 100 ытла вилли выртса юлнă.

Кашни кунах Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен-çĕнĕ хуласем, шахтăсем, поселоксем тата ялсем йышăнать. Фашистсем аркатса пĕтернĕ Донбасс хăйне ирĕке кăларакансене савăнăçлăн кĕтсе илет.

Пĕррехинче, урамсенче çапăçусем пынă вăхăтра, вырăнти çынсем пирĕн боецсене нимĕçсем подвалсемпе çуртсенче туса хатĕрленĕ огневой точкăсене шыраса тупма пулăшнă. Ватă Шахтер Максим Семенович Нагоранский сăнне пурте асăрхарĕç. Хулана пырса кĕрекен гвардеецсене вăл чи малтан тĕлпулса кĕтсе илчĕ, хулана фашистсенчен пĕтĕмпех тасатаччен те вĕсенчен уйăрălмарĕ. Нимĕçсем киличчен старик шахтăра стахановла ĕç меточĕсен инструкторĕ пулса ĕçленĕ. Унăн икĕ ывăлĕ те фронтра. Нимĕçсем ватă шахтертан мăшкăлланă, унăн ĕнине, пĕтĕм пурлăхне тытса илнĕ.

Пожарнăй каланча çинче хĕрлĕ флаг вĕлкĕшсе кайсан, Максим Семенович хулача йышăнса илнĕ чаçăн командирне тупнă та, ашшĕ пек ыталаса, ăна çапла каланă:

— Эпир кĕтрĕмĕр сире, хаклă ывăлăмăрсем. Çăлăнăçăн телейлĕ кунне шахтерсем нихăçан та манас çук. Шахтăсене хăвăртрах ĕçе ярас тĕлĕшпе эпир пурне те тăвăпăр, эсир нимĕçсене хамăрăн тăван Донбасран аяккалла хăвалăр.

Ирĕке кăларнă кашни хуларах, кашни поселокрах Хĕрлĕ Çара хăйсен ирĕкĕпе кĕрсе Донбасшăн пыракан çапăçăва хутшăнас текен çамрăксем пирĕн чаçсен штабĕсене пыра-пыра тулаççĕ.

И. Лапоногов.

Санитари самолечĕсен эскадрильине тума укçа пухаççе

СЕНТЕРВАРРИ. Шуршăл ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем Г. Белова, С. Белов, Г. Николаев, Н. Андреев юлташсем санитари самолечĕсен эскадрильине тума кашниех 60-шар тенкĕрен кая мар укçа пачĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех 1.200 тенкĕ ытла пухăнчĕ. Укçа пухас ĕç малалла пырать. Çавăн пекех Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те 10 пин тенкĕ лухса пама йышăнчĕç. В. Павлов, И. Дмитриев, З. Алексеева тата колхоз председателĕ Логинов юлташсем 200—300-шер тенкĕ пачĕç.

И. Осипов.

Кроса 1,210 çын хутшăннă

ЕТĔРНЕ. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пуçланнă кроса районри йĕлтĕрçĕсен мĕнпур командисенчен пурĕ 1.210 çын хутшăннă. Хутшăнма тивĕçлисенчен колхозниксем кăна мар, хăшпĕр шкулсем те хутшăнман.

Хулари предприятисемпе учреждениесенчен пурĕ 523 çын хутшăннă. Вăл шутран педагогика училищинчен 200 çын, хулари вăтам шкултан 115 çын хутшăннă. Ăмăртура малти вырăна Етĕрне хулинчи вăтам шкулта вĕренекенсем йышăннă. Вăтам шкулта вĕренекен Хвойко 10 километрлă дистанцие 45 минутăра чупса тухса пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çав шкулта вĕренекенсемех Гринецкипе Строганов 10 километра 46 минутăра чупса тухса иккĕмĕш вырăна йышăннă.

Артель квартал планне тултарчĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Каранъялĕнчи „Труд“ промартель коллективĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пуçланнă ăмăртура хăй çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ. Вăл пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарчĕ, çĕршыва пĕлтĕр çак тапхăрта панинчен тăватă хут ытларах лайăх пахалăхлă продукци туса пачĕ.

Çавăнпа пĕрлех, Хĕрлĕ Çар малалла тапăнса пынипе хавхаланса, самолетсен „Промкооперация Чувашии“ ятлă звенине тума 101.000 тенкĕ укçа банка хывнă.

И. Мокеев.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕнче

Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен çырăвĕ пирки

Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем пĕтĕм ялти çамрăксене патне, колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи комсомолецсене, çамрăксене çырăва ЦК ВЛКСМ ырларĕ, комсомол организацийĕсене çуракине хатĕрленес тата ăна ирттерес тĕлĕшпе çак çырура палăртнă ĕçсене тĕп никĕсе хума сĕнчĕ.

Райкомсен, обкомсен, крайкомсен, Союзла республикăсенчи ЛКСМ Центральный Комитечĕсен çак çырăва ялти çамрăксен патне пурин патне те çитермелле. Пур колхозсенче те, совхозсенче те, МТС-сенче те комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсене ирттермелле, вĕсене çав çырăва вуласа туса сÿтсе-явмалла, комсомолецсемпе çамрăксене çуракине хатĕрттулпан ирттерме, тыр тухăçлăхне ÿстерме тăрăшса çĕнтерсе ĕçлеме, ака тапраншĕсене тирпейлĕ усрама, машинăсемпе туллин усă курма мобилизацилемелле. Колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсене ирттерессе кулли ертсе пымалла.

Çуракине туса ирттерес тĕлĕшпе райкомсемпе обкомсен, крайкомсен Союзла республикăсенчи ЛКСМ Центральный Комитечĕсен социализмла ăмăртăва ялан сарса пымалла. Колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи тата районсенчи комсомолецсемпе çамрăксен пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлемелле, йышăннă обязательствăсене пурнăçа кĕртнине пĕрмаях тĕрĕслесе пымалла, ăмăрту результачĕсем çинчен анлăн пĕлтерсе тăмалла.

ЦК ВЛКСМ промышленность предприятийĕсенчи транспортри комсомол организацийĕсене, ВЛКСМ горкомĕсене çуракине ирттерес тĕлĕшпе ялти комсомол организацийĕсене пур майсене те пулăшма хушнă. Иртнĕ çулсенчи опыта шута илсе, тракторсене тата ялхуçалăх машинисене юсама запасла чăсть пухма е хатĕрлеме тытăнмалла. ВКП(б) Обкомĕсемпе килĕшсе, комсомолецсемпе çамрăксенчен ремонт бригадисем туса вĕсене колхозсене, МТС-сене ямалла. Суту-илÿ организацийĕсемпе ОРС-сем çумĕнчи комсомол организацийĕсен çĕрулми пухас ĕçе хастартарах тытăнмалла.

Выльăх апатне перекетлессишĕн

Калинино районĕнчи чылай колхозсенче тырпулсене, пахча-çимĕçсене тата выльăх апачĕсене перекетлĕн расходласси тĕлĕшпе кĕрешмеççĕ. Тырпулсемпе выльăх апачĕсене тирпейлĕн тыткаласан хуçалăха çĕршер пăт перекетлесе хăварма май пурать. Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозра выльăх апатне перекетлĕн тыткаланă. Ферма заведующийĕ Н. Скворцов колхоз фермăна çирĕплетсе панă апата виçĕ уйăх хушшинче тата тепĕр уйăх пурăнмалăх перекетлесе хăварнă, укçа çине çавăрсан вăл 20 пин тенкĕне яхăн пырать. Çак вăхăтрах фермăри выльăхсем мăнтарăланса, ÿсе пынă.

Анчах чылай колхозсенче, тĕслĕхрен, Мăн-Ял Эльменти «Трактор», Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец», Малти Кăкшăмри «Красный кавалерист», Ишлĕри «Комбайн», Уйкас Явăшри Калинин тата Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче выльăх апачĕсене тата ытти тĕрĕ продуктсене перекетлĕн, тирпейлĕн тыткаласси, расходласси çинчен шутласа та пăхмаççĕ.

Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра колхозниксем, конюхсемпе скотниксем, хăйсене ĕçлеме çăмăлрах пултăр тесе, выльăх апатне лавĕ-лавĕпе ферма картишне пырса тăкаççĕ те выльăхсене кăларса çеç яраççĕ. Ку колхозра выльăх апатне акт тăрăх ферма заведующине çирĕплетсе паман. Улăм куписемпе утă капанĕсем ферма картишĕнчен 20—30 метрта çеç лараççĕ пулсан та, кунта выльăх апачĕ питĕ нумай тăккаланать. Капан тĕпĕсене вăхăтра пуçтарса илмеççĕ, нумай утă юр айне пулса пĕтсе пырать. Ку çеç те мар, колхоз правленийĕ ыраш улăмне халĕ те колхозниксене валеçсе паман. Вăл хуçасăррăн саланса выртать, ăна кам тĕл пулнă, çав турткалать, ăна вутă вырăнне те çунтараççĕ.

Софронов, Тихонов бригадирсем колхозăн тырпулне упрамаççĕ. Хĕл варринче молотилкăпа çапнă тырра (10—12 пăта яхăн) итем çинех пăрахса хăварнă. Софронов бригадин айăнĕнче 6 пăт тырра çĕртсе янă.

Уйкас Явăшри Калинин ячĕпе тăракан колхозра та выльăх апачĕсене ферма заведующине çирĕплетсе паман. Çавна пула конюхсемпе скотниксем выльăх апатне йĕркесĕр тăкаклаççĕ. Конюх И. Ястребов лашасене пĕр талăкра 10—12 килограмм ытла çурри улăмне таптаса сая ярать.

«Комбайн» колхозри ферма заведующийĕ Е. Фомина тата старши конюх Г. Андреев юлташсем выльăх апатне перекетлессишĕн пачах интересленмеççĕ, выльăх апачĕ мĕн чухлĕ кирлине те тата вăл мĕн чухлĕ юлнине те пĕлмеççĕ. Сыснасене çĕрулми пĕр виçесĕр юр çине пăрахса çитереççĕ. Кашни çитермессерен 8—10-шар килограмм çĕрулми юр çине шăйса илсе пĕтет. Утă тăмана сулăн çине тăкаççĕ, виçсĕр „аккаласа сая янине, виçĕ уйăх хушшинче колхоз пурĕ 19.110 тенкĕ убытка тунă.

Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхозра та ферма заведующине выльăх апатне çирĕплетсе паман. Выльăх апатне перекетлĕн тыткалассишĕн кунта та пачах тăрăшмаççĕ. Конюхсем кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче лашасене тата ытти выльăхсене утă капанĕсем патне кăларса яраççĕ. Колхозниксен ĕнисем те кашни кунах утă капанĕсем патĕнче апатланаççĕ. Мĕн чухлĕ апат ура айне кайса пĕтет! Кашни кунах кунта, эпир шутласа пăхнă тăрăх, пĕр пăт та вунă кĕренке утă выльăхсен урисем айĕнче таптаса сая каять. Çапла вара икĕ уйăх хушшинче «Красноармеец» колхозра 9.150 тенкĕлĕх апата ним усăсăр çухатнă.

Выльăх апачĕпе ытти продуктсене çакăн пек шутсăр-тирпейсĕр расходлассине халех пĕтермелле. Выльăх апатне тирпейлĕн, перекетлĕн расходлас ĕçе пур колхозсенче те халех йĕркелемелле.

С. КОШКИН,
ВКП(б) Калинино райкомĕн инструкторĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пуçламĕш парторганизаци начар ĕçлет

ЙЕПРЕÇ. Партин Туçари „Красный металлист" колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Т. Архипов) партиллĕ-политикăллă ĕçе япăхтарса янă. Унта коммунистсен пухăвĕсене ирттерме пăрахнă. 1942 çулта пĕтĕмпе те икĕ пуху çеç ирттернĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕç сÿнсе ларнă. Агитаторсем хут çинче çеç шутланса тăраççĕ. Пуçламĕш парторганизаци агитаторсемпе нимĕнле ĕç те туса ирттермест. Юлашки 4—5 уйăх хушшинче агитаторсемпе пĕр семинар е канашлу та ирттермен.

Вулав çурчĕпе колхоз клубĕ хупă тăраççĕ. Темиçе уйăх хушши ĕнтĕ вĕсенче нимĕнле ĕç те туса ирттермеççĕ. Учительсем агитациллĕ-массăллă ĕçĕн тулашĕнче тăраççĕ. Шкул директорĕ Романов чылай вăхăт хушши ĕнтĕ трактор бригадинче учетчик пулса ĕçлет. Çавна пула вăл шкулти ĕçсене ертсе пыма та, ялти политикăллă ĕçе хутшăнма та пăрахнă.

Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе пачах ĕçлемеççĕ. Коммунист Васьков нимĕнле хаçат-журнал та çырăнса илмест, вĕсене йĕркеллĕн вуласа тăмасть.

Унти парторганизаци хуçалăхлă-политикăллă задачăсене пурнăçлас ĕçе ялти актива—коммунистсемпе комсомолецсене, учительсене тата ялсоветпа колхоз активне начар мобилизациленĕ. Ялсоветри „Красный металлист" колхоз уборка ĕçĕсене вăрăма тăсна, клевер, вир, силослăх акнă культурăсене вăхăтра пухса кĕртмесĕр юр айне хăварнă. Авăн çапса пĕтермен, колхоз çуракине хатĕрленме тытăнманпа пĕрех. Вырăнти удобренисене хатĕрлемелли уйăхлăхра уя 3.324 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, 925 лав çеç кăларнă, кĕл 100 центнер вырăнне 16 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 70 центнер вырăнне 12 центнер çеç пухнă. Минераллă удобренисене кÿрсе килмен, торф кăларма тытăнман. Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсасси „тимĕрçĕ çуккипе" чарăнса тăрать.

Колхоз вăрман хатĕрлевĕн 1-мĕш кварталти планне касас енĕпе 18 процент, турттарас енĕпе 21 процент çеç тултарнă. Паян кунччен те государствăна тыра тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурнăçламан.

Ĕç çавнашкал япăхни ялсовет исполкомĕн председателĕ коммунист Павлов, колхоз председателĕ коммунист Новиков начар ĕçленинчен те чылай килнĕ. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Архипов колхозри çитменлĕхсемпе кĕрешсе пурăнать.

Партин „Красный металлист" колхозри пуçламĕш организацийĕ начар ĕçлени çинчен ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекенсем пĕлеççĕ, анчах унăн ĕçне лайăхлатассишĕн нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Д. Михайлов.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене—парнесем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Анат-Тимĕрçкассинчи «Красный борец» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа боецсем патне 10 килограмм çу, пĕр сысна, 10 уйрăм посылка ячĕç. Н. Кириллов.

Ют çĕршывсенче

„Харькова йышăнса илни совет халăхĕн ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешÿри чапне ÿстерет"

Совет войскисем çĕнĕ çĕнтерÿ тунă пирки Англире мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхине, совет войскисем Харькова йышăнса илнине пĕлсенех, Лондонри радио ун çинчен пĕтĕм çĕршыва пĕлтернĕ. Вăл пĕлтерĕве Лондонри радио темиçе хут та панă. Радиокомментаторсем çакăн çинчен статьясем панă. Радио тăрăх тухса калакан Роберт Фрезер хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: совет войскисем Харькова йышăнса илни çинчен пĕлтерекен хыпар Германи çарĕсемшĕн вилĕ пытарнă чух çапакан чан сасси пек илтĕннĕ. Лондонри радиопередачăра Харькова йышăнса илни совет халăхĕн ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешÿри чапне ÿстерет тесе уйрăмăнах палăртса хăварнă. Радиокомментатор Хейстингс çапла каланă: Хĕрлĕ Çар Харькова йышăнса илни Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри çапăçусенче çĕнĕ тапхăр пуçланнине пĕлтерет тата вăл Хĕрлĕ Çар валли анлă пуласлăх уçса парать, тенĕ. Харькова йышăнса илни Хĕрлĕ Çара тăшмана тата вăйлăрах çапма май парĕ.

Пур радиопередачăсенче те Харьков промышленноçлă пысăк центр пулнине, чугунçул çыхăнăвĕсен пăллă узелĕ пулнине уйрăмăнах палăртаççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонри хаçатсем пурте совет войскисен çĕнĕ çĕнтерĕвĕ стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртаççĕ. „Дейли телеграф энд морнинг пост" хаçат çапла çырать: гитлерла командованин хулана тем пулсан та хăйĕн аллинче хăварасшăн пулнă. Нимĕçсем çуркуннe çитсен тата шывшур тапрансан совет çарĕсем Харькова илесси пурнăçа кĕреймин задача пулса тăрĕ, тесе шаннă. Нимĕçсен çакăн пек шанчăкĕсем, тет хаçат, вырăс юрĕнчен маларах ирĕлсе кайрĕç.

„Дейли экспресс" хаçат хăйĕн умстатьинче Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ нимĕç войскисен кăмăлне тата ытларах çапса хуçать, тесе çырать. „1943 çулта,—тенĕ статьяра,—Европа континентĕнчи ĕçе пирĕн вĕçне çитермелле".

„Дейли телеграф энд морнинг пост" хаçат умстатьяра Харькова йышăнса илни стратеги тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса çапла çырать: Харьков районĕнче пулса тăнă хушăкран нумай шала кĕрсе кайни Хĕрлĕ Çара стратегиллĕ пысăк майсем тупса парать.

АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх Харькова йышăнса илни çинчен калакан хыпар Лондонра кĕтмен çĕртен килсе çитнĕ питĕ савăнăçлă хыпар пек пулса тăнă. Вăл событие Англире Хĕрлĕ Çарăн питĕ пысăк çĕнтерĕвĕ тесе хаклаççĕ.

Англин информаци министерстви хăйĕн пĕлтерĕвĕнче Харькова илни стратеги тĕлĕшĕнчен пит пысăк вырăн йышăннине палăртать. Иртнĕ çулла Германи тунă наступленире Харьков база пулса тăнă, вăл СССР-ĕнчи чи пысăк чугунçул центрĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Рейтер агентствин вăрçă çинчен çырса тăракан сотрудникĕ Харькова илни Сталинград патĕнчи çĕнтерÿ хыççăн совет войскисен чи пысăк ăнăçлăхĕ пулса тăрать, тесе çырать.

Англири хаçатсем çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çар Дон çинчи Ростова илни çинчен нумай çыраççĕ.

Англири паллă публицист Гарвин „Санди экспресс" хаçатра пичетленнĕ хăйĕн статьинче çапла çырать: советсен çĕнĕ çĕнтерĕвĕсен пĕлтерĕшĕ çын шухăшлама пултарнинчен те пысăкрах. Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлăхĕсем гитлеризма çав тери вăйлăн кисретрĕç. Хĕрлĕ Çар хăйĕн çĕнтерĕвĕсемпе союзниксем валли питĕ анлă тата калама çук лайăх майсем туса пачĕ. Рузвельтпа Черчилль Касабланкăра тĕл пулнă вăхăтра çак япаласем пулман. Ун чухнехи вăхăта илсен, вăй, çине тăни тата союзниксен операцийĕсен масштабĕ чи пысăк виçене çитнĕ пек туйăнатчĕç. Халĕ ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çарăн çав тери пысăк ăнăçăвĕсем туса панă майсемпе союзниксем усă курас теççĕ пулсан, вĕсен çак ыйтусене тепĕр хут пăхса тухмалла пулать. Хĕвеланăçĕнчи демократисем, тесе çырать Гарвин, тĕрĕссипе илсен, вĕсен аллинчи пур вăйсемпе вырăс çарĕсене, вырăс халăхне пулăшма тахçанах тухмалла пулнă, мĕншĕн тесен вырăссем ытти союзниксенчен (вĕсене пурне те пĕрле илсен те) пĕрлехи ĕçсемшĕн нумай ытларах юн тăкаççĕ, нумай ытларах жертвăсем тÿсеççĕ. Кая юлнă çав обязательствăна пурнăçласа, хĕвеланăçĕнчи державăсем хăйсен пурнăç интересĕсенчен тухса тăракан ĕçсене çеç тунă пулĕччĕç. Гарвин уйрăмăнах çакна палăртать: Хĕвеланăçĕнчи державăсем тата Россия Европăра Гитлера икĕ енчен пырса çапас пулсан, гитлеризма çак çултах тĕп тума пулĕ, тет.

„Дейли экспресс" хаçат палăрмалли çĕрте подполковник Каннеди статьине пичетленĕ. Хĕвеланăç Европăран Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта нумай дивизисем куçарни çинчен советсем пĕлтернине илсе, вăл çапла çырать: „Германие халĕ, уншăн çак хăрушă тапхăрта, хĕвеланăçĕнчен тапăннине хирĕç кĕрешме мĕн тери йывăр пулассине ăнланатпăр эпир. Пирĕн çулпуççем союзниксен анлă наступленийĕ çинчен калаçнă вăхăтра тивĕçлĕ майсем хăйсемех алăкран шаккана пек туйăнать".

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИ ÇИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 17-мĕшĕнче, кăнтăрла, бомбардировочнăй авиацин самолечĕсем Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене атакăланă. Истребительсен эскадрильи Дюнкерк районне вĕçсе пырса тапăннă. Истребительсен ытти соединенийĕсем Çурçĕр Францири чугунçулсене тапăнса сиен кÿнĕ. Тăвата истребитель хăйсен базисене таврăнман.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Хĕвеланăç Германин тĕрлĕ объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Ытти самолетсем тăшманăн Франци çыранĕнчи карапĕсене атакăланă, вĕсенчен пĕрине пĕтернĕ. Пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер 8-мĕш армин малти пайĕсем Марет лининчен 30 километрта тăракан пĕр пункта пырса çитнĕ. Февралĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Гераклионри (Крит утравĕ) аэродромпа гавань çине, çавăн пекех тата Сицили утравĕн чугунçул линийĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

ФРАНЦИ КАРАПĔСЕМ ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕНЕ ХИРĔÇ ТĂВАКАН ОПЕРАЦИСЕНЕ ХУТШĂНАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Çывăхри вăхăтрах тĕнĕл держависене хирĕç тăвакан операцисене Франци флочĕ хутшăнмалла. Вăл флот шутне 3 линкор, 9 крейсер, пĕр авианосец, 9 эсминец, 14 подводнăй лодка тата темиçе конвойнăй карапсем кĕреççĕ. Темиçе карап Америкăна пырса çитнĕ те ĕнтĕ.

Хăйсен ĕçĕсене юратса тăвакан тимĕрçĕсем

СĔНТĔРВĂРРИ. Ивановăри кирпĕч заводĕнче ĕçлекен тимĕрçĕ А. Лебедев юлташ, 68 çулхи старик пулин те, хăйĕн ĕçне яланах лайăх та вăхăтра туса пырать. Вăл кирпĕч заводĕнче тимĕрçĕ пулса 18-мĕш çул ĕçлет. Лебедев юлташ заводра тĕрлĕрен тимĕр-тăмăр татăкĕсемпе усă курса, 1942 çулта мĕн пурĕ 2 тонна лайăх тимĕр перекетлесе хăварнă тата Ольдикассинчи „Восток", Паникассинчи „Шордан" колхозĕсене ялхуçалăх машинисем юсаса панă. Халĕ вăл, заводри ĕçсене тунипе пĕрлех, кÿршĕри колхозсен ялхуçалăх машинисене тăрăшса юсать.

Лебедев юлташ тимĕрçĕ пулса çеç ĕçлемест, вăл тата обществăллă ĕçсене те хутшăнать. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене рабочисемпе служащисене каласа ăнлантарать.

Çавăн пекех Турханкассинчи „Верный путь" колхоз тимĕрçи А. Емельянов юлташ та тăрăшса ĕçлет. Вăл ку таранччен пурĕ 19 плуг, 2 сеялка юсаса хучĕ.

Н. Константинов.

Гордеев тимĕрçĕн пуçарăвĕпе

КАНАШ. Красноармейски районри «Янмурзино» колхоз тимĕрçи Лаврентий Гордеев юлташ Чăваш республикинчи колхозсен тимĕрçисене ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе социализмла ăмăртса ĕçлеме чĕнчĕ. Гордеев юлташăн чĕнĕвне ăнланса илсе, Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхоз тимĕрçи Н. Данилов юлташ ăмăртăва хутшăнчĕ. Çак иртнĕ эрнесенче Данилов юлташ Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн 23 плуг, 2 сеялка юсаса лартрĕ. Çакăн хыççăн Данилов юлташ кÿршĕри «Динамо» колхозăн ялхуçалăх машинисене юсама тытăнчĕ. Паянхи куна ку колхозăн 11 плуг юсаса лартнă. Çак колхозсен мĕнпур ялхуçалăх машинисене юсаса лартнă хыççăн малашне Данилов юлташ Йĕпреç районĕнчи колхозсен ялхуçалăх машинисене юсама тытăнать.

Т. Турхан.

Конкурса хутшăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Мыслецри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем академик Лысенко юлташ çырăвне сÿтсе-явнă хыççăн çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тĕлĕшпе иртекен Пĕтĕм Союзри конкурса хутшăнчĕç.

Кашни вĕренекенпе пионер çĕрулми тăррине вăрлăх валли 5 килограмран кая мар касса хатĕрлесе ăна лайăх пăхса усрама, 3-шер витре кĕл тата 2,5-шер килограмм кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухма обязательство илчĕç.

СУД

КОЛХОЗ ТЫРРИНЕ ВĂРЛАНĂШĂН

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пăлапуç Нурăсри М. Печникова колхоз итемĕнче хурал тăнă. Çав вăхăтра вăл колхоз тыррине вăрласа пуранна.

Çак ĕçе районри халăх сучĕ пăхса тухрĕ, М. Печниковăна 4 çул хушши тĕрмене хупса усрамалла турĕ.

Н. Жадаев.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

В. ХУДАРСЕМ.

Икĕ юрă*)

1. ТĂВАН ÇĔРШЫВ

„Человек без родины—
что соловей без песни".
(Вырăс халăх сăмахĕ).

...Хĕрелсе, шуралса çутă ир килет-и?

Ял каччисем, хĕрĕсем, çĕнĕ юрă юрласа, чечек çырне утаççи, сарă ыраш хушшинче кĕлте çыхаççи, çурласене çĕклесе яла килеççи?..

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—
сана асра тытатăп!

* * *

...Вăрман урлă каçса, хĕвел çуле тухать-и?

Вăштăр-вăштăр утă çинче:—Анне, анне!—тесе инке ачи макăрать-и, пăт-пăтĕлтĕк путене таçта-таçта юрлать-и, çÿлĕ-çÿлĕ тÿпере тăрри вĕçет-и?..

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—
сана асра тытăп!

* * *

...Сарă çу пек сар хĕвел хĕртнĕ çемĕн хĕртет-и?

Кăнтăр çитнĕ вăхăтра сухаçсем суха тăваççи, вĕсен ачи-пăчисем чĕр шыв ăсса пыраççи, çутă пĕве тĕпĕнчен ылттăн-кĕмĕл пулăсем сике-сике пăхаççи?..

Тăван çăршыв, сана аса илетĕп,—
сана асра тытатăп!

*

...Каçхи кÿлĕм вăхăчĕ иртсе-иртсе пырать-и?

Тĕттĕм вăрман, сĕм вăрман, нÿрĕ пухать-и, хиртен, уйран, кĕрлесе, кĕтÿ килет-и, çамрăк инке-пике, упăшкине кĕтсе, лаççа ящка çакать-и?..

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—
сана асра тытатăп.

* * *

...Ярăм пĕлĕт каçа кĕтсе илет-и?

Пин-пин çăлтăр тÿпере çиççе-çиççе тăрать-и, вĕсем патне çур уйăх çĕр-çĕрлеме пырать-и, каччă купăс каласан, хурал йытти вĕрет-и?.

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—
сана асра тытатăп!

2. ĔМĔТ

...Чăнкăрах çыранлă пысăк та тарăн шырлан. Чăваш çынни тÿрех хăйĕн çĕршывне аса илет: ун пек çырма-çатрасем, шырлансем Чăваш çĕршывĕнче час-часах тĕл пулаççĕ. Шырланăн тарăн тĕпĕнче шăнкăртатса вăрман шывĕ юхать. В. юханшывĕ патне çитсе унăн пысăк талккăшĕпе пĕрлешет те çухалса каять.

Йĕри-тавра вĕтĕ вăрман. Çĕмĕрт, çĕмĕрт! Вĕçĕмсĕр çĕмĕрт йывăççи,—турат тулли шурă чечек.

Çакăн чухлĕ çĕмĕрт йывăççи, çĕмĕрт çеçки эпĕ нихăçан та, нисçта та курман. Çĕмĕрт чечекĕн ырă шăрши пĕтĕм таврана сарăлнă. Вăрман сывлăшĕ шерпет пек: уçă та тутлă.

Çĕмĕрт çеçки куçран каймасть. Чечеке ларнă çĕмĕрт хушшинче тăван юрă хăй-ăссĕнех аса килет.

Çĕмĕрт çеçки çурăлсан та,
Çĕмĕрт çеçки çурăлсан—
Тухас килмест вăрмантан.

Анчах та çак кĕтес тăван юрăран, хам çуралнă çĕршывран питех те катара... Чăн та, инçетре, инçетре Хутар сали—тăван сăпка, инçетре-инçетре вăтă Шупашкар. Çапах та ку кĕтес те пирĕн çĕршывăмăр, чечексем те пирĕн çĕршыври чечексемех, тутлă та паха...

Йĕри-тавра Тăван çĕршыв—Совет Союзĕ.

— Тен, шăпах çакăнта Тăван çĕршывшăн çапăçса вилĕпĕр. Пирĕн масар çак чечек вăрманĕнче пулĕ,—тет юлташ.

— Тăван çĕршывшăн кĕрешĕпĕр, вилес пек çапăçăпăр. Анчах, тусăм, вилмĕпĕр. Тăван çĕршывăн чечекĕсем хушшинче вăтăр çул, хĕрĕх çул пурăнăпăр. Çакăн пек манăн ĕмĕт!—тетĕп те çĕмĕрт чечекне, чи лайăххине, татса юлташăма тыттаратăп

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

*)Ку материалсене „Илемлĕ литература" альманахăн 12-мĕш померĕнчен илнĕ.

Февралĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен СССР Пир-авăр промышленность Халăх Комиссариачĕн „Энерготрансучтекстилĕн" Шупашкарти филиалĕ 3-мĕш класри шоферсене хатĕрлекен тата шоферсене газогенераторлă машинăсемпе çÿреме вĕрентекен курса производствăран уйăрăлса та, уйăрăлмасăр та вĕренме илет.

Курсра вĕреннĕшĕн уйрăм граждансенчен те, хăйсен работникĕсене командировка шучĕпе янă предприятисенчен те укçа илмеççĕ.

Шоферсем хатĕрлекен курсра вĕренекенсене уйăхра 150 тенкĕ стипенди тÿлеççĕ тата вĕсем валли столовăй пур.

3-мĕш класри шоферсене хатĕрлекен курсра производствăран уйăрăлса 2 уйăх таран вĕренмелле, газогенераторлă машинăсемпе çÿреме вĕрентекен курсра—производствăран уйăрăлса вĕренекенсене 10 кун, производствăран уйăрăлмасăрах вĕренекенсене 20 кун хушши вĕрентеççĕ.

3-мĕш класри шоферсене хатĕрлекен курса 17 çултан çамрăк мар арçынсемпе хĕрарăмсене, 4 çултан кая мар вĕреннĕскерсене илеççĕ.

Пур ыйтусемпе те филиалăн канцелярине çак адреспа çырмалла е пырса ыйтмалла: Шупашкар, К. Либкнехт урамĕ, 14, канмалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах 9 сехетрен пуçласа 18 сехете çитиччен.

2—1

Дирекци.

Шупашкарти техно-ткацки фабрикăна çакăн пек ĕçлекенсем кирлĕ: главнăй бухгалтер, электромонтер, шорник, охранниксем тата строительствăра ĕçлекен тĕрлĕ профессиллĕ рабочисем.

Фабрикăра столовăй ĕçлет тата ларек пур. Ĕç укçи килĕшнĕ тăрăх.

Фабрика адресĕ: Волгострой поселокĕ, Черепицă завочĕн çуртĕ. Телефон 7—16

2—2

НКЭП-ăн Горькири электротехнически техникумĕн филиалĕ вĕренекенсене çĕнĕрен пухать.

Производствăра ĕçлесе тăнă вăхăтрах техникум металсене шăрăтмасăр касса е пусарса ĕçлекен техник-технологсем тата аппаратсем тăвакан электриксем хатĕрлет.

Техникумра 4 çул та 6 уйăх вĕренмелле.

Техникума вăтам шкулăн 7 класне пĕтернисене çулне-мĕнне пăхмасăрах илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсене вăтам шкулăн 7 класĕн программи тăрăх çак предметсемпе экзамен партараççĕ:

1) вырăс чĕлхипе (çыртарса тата сăмахпа калаттарса),

2) математикăпа (çыртарса тата сăмахпа калаттарса),

3) СССР Конституцийĕпе.

Вăтам шкулăн 7 класне тĕп предметсем тăрăх „отлично" паллăпа, çавăн пекех тата вăтам шкулăн 7 класне 1941-мĕшпе 1942-мĕш çулсенче тĕп предметсем тăрăх „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе пĕтернисене испытанисĕрех илеççĕ.

1941-мĕш е 1942-мĕш çулта испытанире „отлично" е „хорошо" паллăсемпе мар испытани панă çынсене пушă вырăнсем пулсан испытанисĕрех илеççĕ. Пушă вырăнсем çук пулсан, вĕсене конкурснăй экзаменсем тăрăх илеççĕ.

Вĕреннишĕн тÿлесси техникумра ытти çĕрти пекех.

Заявленисене февралĕн 24-мĕшĕнчен илеççĕ. Занятисем мартăн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Заявленисене тунтикун, ытларикун, кĕçнерникун тата эрнекун 19 сехетрен пуçласа 21 сехете çитиччен техникумра (Ярославская ур., 51, 4-мĕш №-лĕ шкулăн çуртĕнче) йышăнаççĕ.

ОУЛТ-ăн Пир-авăрпа галантерея фабрикин фабкомĕн пичечĕ çухалнă. Çак пичете законлă мар тесе шутламалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 953 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п